# ТĔРРИСЕМПЕ ПУКАНИЙĔСЕМ ГЕРМАНИЕ ТЕ ÇИТĔÇ

ТАТЬЯНА Шаркова ӳнерçĕ тата ун алли витĕр тухнӑ чӑваш тĕррисемпе пуканийĕсем пирки хамӑр вулакансене пĕр хут çеç мар каласа кӑтартнӑ. Ун пирки çĕнĕрен калаçу пуçарма тепĕр сӑлтав тупӑнчĕ: çак кунсенче Татьяна Мускавран таврӑнчĕ. Унта, тĕрĕсрех, тĕп хулари декоративлӑ прикладной тата халӑх искусствисен музейĕнче унӑн ятарлӑ куравĕ иртрĕ.

Унта 80 яхӑн ĕç тӑратнисĕр пуçне, хӑйĕн коллекцийĕнчи халӑх тумĕн хатĕрĕсене – масмак, сурпан, кĕпе тата ытти те – илсе кайнӑ. Çавӑн пекех хӑй вӑхӑтĕнче Татьяна пирки ӳкернĕ "Тĕнче тӑршшĕ сурпан сарнӑ пулӑттӑм" /"Вышила бы на весь мир узор"/, "Иероглифы Тора", "Из вьюги я вышла" видеофильмсемпе паллаштарнӑ. Унсӑр пуçне кунтах художницӑн "Три солнца Татьяны Шарковой" альбом-каталогĕн, чӑваш тумлĕ пуканесен открыткисен пуххин презентацийĕ те иртнĕ.

Курава уçма вара Раççей халӑх художникĕ, Раççей Федерацийĕн И.Репин ячĕллĕ патшалӑх преми лауреачĕ Г.В.Ларишев, Раççей Художниксен союзĕн, асӑннӑ музей ĕçченĕсем, студентсем хутшӑннӑ. Мускаври чӑваш хорĕ, ЧР тава тивĕçлĕ артистки Елена Соловьева чӑваш халӑх юрри-кĕввипе паллаштарнӑ.

Халĕ çаксем хыçа юлнӑ ĕнтĕ. Курав пирки Татьяна Васильевна çапла пĕлтерчĕ:

– Мускав çыннисем, хӑнисем чӑваш искусствипе паллашма тӳр килнĕшĕн савӑнса пĕлтерессĕ. Çак музей 25 çул ĕçлет. Унта çĕршыври тĕрлĕ халӑхӑн авалхи савӑт-сапи, тумĕ, ытти те упранаççĕ. Ман куравпа юнашарти залсенче Леонид Утесов юрăçпа Мария Миронова актрисӑн коллекцийĕсенчи фарфор хатĕрсене вырнаçтарнӑччĕ.

Татьянӑн тĕп хулари куравне Германин Раççейри посолĕ те çитсе курнӑ. Пирĕн ӳнерçĕн искусстви чӑннипех кӑсӑклантарнӑ ӑна. Çакӑн хыççӑн вӑл Шарковӑн ĕçĕсен куравне Германин Мускаври посольствин шкулĕнче йĕркелеме сĕнӳ панӑ. Татьяна та хирĕç мар. Курав кӑçалхи авӑн-юпа уйӑхĕсенче иртмелле. Ун хыççӑн Германире те ятарлӑ курав йĕркелесси пирки калаçу пулнӑ.

**Надежда СМИРНОВА.**

**●ТАТЬЯНА ШАРКОВА /ВАРРИНЧИ/ МУСКАВРИ ĔÇТЕШĔСЕН ХУШШИНЧЕ.**

